Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

103 (7957) № ✻ Юн кун, 2011 ҫулхи раштав (декабрь) уйӑхӗн 21-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

## Кашни килтех ҫутӑ пултӑр

**Декабрӗн 22-мӗшӗ – Энергетик кунӗ**



*Ҫак тӗллеве тӗпе хурса вӑйхураҫҫӗ «МРСК Волга»-«Чувашэнерго» уҫӑ акционер обществин Ҫурҫӗрти производство уйрӑмӗн Муркашри участокӗнче ӗҫлекен Валерий Баранов, Рустам Залялиев, Андрей Подилкин тата Венегдит Мартынов. Электромонтерсен куллен тенӗ пекех, ҫанталӑка е талӑкӑн кирек хӑш вӑхӑтне пӑхмасӑрах, ҫула тухма тивет. Хӑш чухне кану кунӗ те вӗсемшӗн кану кунӗ мар, уяв та уяв мар. Ку вара – пӗтӗмпех пирӗншӗн. Ҫынсене электроэнерги вӗҫӗм кирлӗ вӗт-ха.*

*В. Барановпа В. Мартынов ку ӗҫре 1974–1975 ҫултанпах. Пӗлӗвӗ те, ӑсталӑхӗ те, опычӗ те пӗчӗк мар вӗсен. Бригадӑри ҫамрӑксемшӗн вара вӗсем – ӑста наставниксем. Пулӑшма ӳркенсе тӑмаҫҫӗ. Туслӑ коллективра ҫапла пулмалла та.*

*В. ШАПОШНИКОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.*

## Районти парламентра

## Черетсӗр 14-мӗш лару

Кӑҫалхи декабрӗн 20-мӗшӗнче район администрацийӗн ларусен залӗнче депутатсен районти Пухӑвӗн черетсӗр 14-мӗш ларӑвӗ иртрӗ.

Депутатсем пӑхса тухма кун йӗркине ҫак ыйтусене кӗртрӗҫ:

1. Депутатсен Муркаш район Пухӑвӗн 2010 ҫулхи декабрӗн 2-мӗшӗнчи С-3/2 № «Муркаш районӗн 2011 ҫулхи бюджечӗ ҫинчен» йышӑнӑвне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен.

2. Муркаш район администрацийӗн пуҫлӑхӗн заявленийӗ ҫинчен.

3. Муркаш район администрацийӗн пуҫлӑхне контрактпа ҫирӗплетиччен Муркаш район администрацийӗн пуҫлӑхӗн тивӗҫӗсене пурнӑҫласси шанса парасси ҫинчен.

4. Чӑваш Республикинчи Муркаш район администрацийӗн пуҫлӑхӗн должноҫне пурнӑҫлакана суйлаҫа илме ирттерекен конкурс комиссийӗн членӗсене ҫирӗплетесси ҫинчен.

Пӗрремӗш ыйтупа район администрацийӗн финанс пайӗн пуҫлӑхӗ Р.И. Ананьева тухса каларӗ. Ыйтӑва сӳтсе явса депутатсен районти Пухӑвӗн 2010 ҫулхи декабрӗн 2-мӗшӗнчи С-3/2 № «Муркаш районӗн 2011 ҫулхи бюджечӗ ҫинчен» йышӑнӑвне хӑш-пӗр улшӑнусем кӗртрӗҫ.

Иккӗмӗш ыйтупа район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов хӑйӗн тивӗҫӗсене пурнӑҫлассине вӑхӑт ҫитмесӗрех пӑрахӑҫласси пирки панӑ заявленине пӑхса тухрӗҫ.

Виҫҫӗмӗш ыйтӑва сӳтсе явнӑ май депутатсем Муркаш район администрацийӗн пуҫлӑхне контрактпа ҫирӗплетиччен Муркаш район администрацийӗн пуҫлӑхӗн тивӗҫӗсене пурнӑҫлассине район администрацийӗн пуҫлӑхӗн пӗрремӗш ҫумӗ – ял хуҫалӑх пайӗн пуҫлӑхӗ В.А. Калинин ҫине хучӗҫ.

Тӑваттӑмӗш ыйтӑва тишкерсе депутатсем Муркаш район администрацийӗн пуҫлӑхӗн должноҫне йышӑнма конкурс ирттерме конкурс комиссийӗн йышне депутатсен районти Пухӑвӗнчен ҫаксене кӗртрӗҫ:

– П.П. Давыдов, «Ударник» ФГУП директорӗ;

– В.С. Краснов, ӗҫ ветеранӗ, Муркаш районӗн Хисеплӗ гражданинӗ;

– В.Н. Любимова, депутатсен районти Пухӑвӗн депутачӗ, Ярапайкассинчи пӗтӗмӗшле врач практикин уйрӑмӗн врачӗ;

– И.В. Николаев, Муркаш район пуҫлӑхӗ – депутатсен Муркаш район Пухӑвӗн председателӗ;

– Л.Ю. Тарасова, район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ – йӗркелӳпе кадрсен, право енӗпе тивӗҫтерессин тата вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсемпе ӗҫлекен пайӗн пуҫлӑхӗ;

– Н.Л. Царев, депутатсен районти Пухӑвӗн депутачӗ, «Передовик» СХПК председателӗ.

Ҫавӑн пекех депутатсем Муркаш район администрацийӗн пуҫлӑхне контрактпа ҫирӗплетме конкурс ирттерме конкурс комиссийӗн йышне 3 ҫынна Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗ сӗннипе кӗртме Чӑваш Республикин Президенчӗ патне ыйтупа тухма йышӑнчӗҫ.

**Хамӑр инф.**

### Выражаю благодарность

Хочу поблагодарить всех жителей Моргаушского района за поддержку, оказанную мне на выборах в Государственный Совет Чувашской Республики, а также поздравить с наступающим Новым 2012 годом и пожелать благополучия, процветания, новых побед и крепкого здоровья.

**С уважением Н.Г. Ванеркин.**

**Суту-илӳ**

## Сентресем вӑхӑтлӑх пушанчӗҫ

***Чылайӑшӗ асӑрхарӗ пулӗ, Муркаш райповӗн лавккисенче хӑш-пӗр улшӑну пулса иртрӗ, сентресем ҫинче алкоголь продукцийӗ ҫухалчӗ. Ҫакӑ халӑх хушшинче тӗрлӗ калаҫу ҫуратрӗ, хаҫат редакцине те ку тӗлӗшпе шӑнкӑравларӗҫ. Ҫак ыйтӑва уҫӑмлатма эпӗ Муркаш райпо правленийӗн ертӳҫине Р.В. СКВОРЦОВӐПА ҫыхӑнтӑм.***

– Ку тӗлӗшпе пӑшӑрханма кирлӗ мар, ҫакӑ – вӑхӑтлӑх пулӑм. Сентресем алкоголь продукцийӗнчен пушанни унпа суту-илӳ тумалли лицензи вӑхӑчӗ тухнипе ҫыхӑннӑ. Ӑна ҫак кунсенче йӗркелесе ҫитеретпӗр. Уяв тӗлне лавккасенчи сентресем малтанхи пекех тулӑх пулӗҫ, хальлӗхе хакӗсем улшӑнмаҫҫӗ.

Самантпа усӑ курса тепӗр хыпар пӗлтересшӗн. ***Декабрӗн 23-мӗшӗнче Чапаев урамӗнче (малтанхи киносеть ҫурчӗ) 11 сехет тӗлӗнче апатланӑвӑн ҫӗнӗ точки уҫӑлассине пӗлтеретӗп. Савӑнӑҫлӑ самантра пурне те хапӑл туса йыхравлатпӑр.***

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаҫнӑ.**

**Саламлатпӑр**

**УВАЖАЕМЫЕ ЭНЕРГЕТИКИ!**

От всей души поздравляю всех энергетиков и всех, у кого работа связана с электричеством, с наступающим Днем энергетика! Желаю творческих успехов, безаварийной работы, благополучия в семье и всех земных благ.

**С поздравлением директор ООО «Энергосервис» В.А. МОИСЕЕВ.**

Ырӑ кӑмӑллӑ ҫыннӑмӑра – Мӑн Сӗнтӗрте пурӑнакан **Нина Александровна МАРИНКИНӐНА** ӑшшӑн ытлаҫа, хӗрӳллӗн ҫупӑрласа чаплӑ юбилейпа пур кӑмӑлтан саламлатпӑр. Вӑрӑм та ҫутӑ ӑраскаллӑ ӗмӗр пурӑнма ирхи сывлӑм пек таса сывлӑх, иксӗлми ҫӑл куҫ пек тапса тӑракан сӗнӗрен те ҫӗнӗ вӑй-хал, ҫурхи хӗвел пек ӑш пиллӗн шӑранса тӑракан савӑк кӑмӑл сунатпӑр.

**Пысӑк салампа: Суворовсен, Трофимовсен, Михайловсен, Ивановсен ҫемйисем.**



Чи хаклӑ ҫыннӑмӑра, аннене, йӑмӑка, аппана, хисеплӗ тӑвана – Исетеркке ялӗнче пурӑнакан **Галина Кондратьевна НИКОЛАЕВӐНА** 55 ҫулхи сумлӑ юбилей ячӗпе чун-чӗререн саламлатпӑр. Ырлӑхсывлӑх, иксӗлми телей, вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр. Тайма пуҫ сана, аннемӗр. Эсӗ пурри – нимӗнпе виҫейми пуянлӑх, савӑнӑҫ, телей. Кун-ҫулу вӑрӑм та такӑр пултӑр. Ачусен, мӑнукусен хаваслӑ сассине итлесе, ырлӑхне курса савӑнмалла пултӑр. Тавах Турра эсӗ пурришӗн, пире хавхалантарса пурӑннишӗн. Тата Турри сана вӑй-хал парнелетӗр, чир-чӗртен упраса тӑтӑр. Тавтапуҫ сана, аннеҫӗм, пуриншӗн те. Эпир сана пурте юрататпӑр, хисеплетпӗр.

**Саламлаканӗсем: ывӑлӗпе кинӗ, хӗрӗсемпе кӗрӳшӗсем, 5 мӑнукӗ, тӑванӗсем.**



Хаклӑран та хаклӑ ҫыннӑмӑра – Муркашра пурӑнакан **Валентина Петровна МАКАРОВӐНА** 60 ҫулхи юбилей ячӗпе чунчӗререн, мӗн пур ӑшӑ туйӑмпа саламлатпӑр. Эсӗ пирӗншӗн – чи хакли, тавах сана ырӑ кӑмӑлушӑн, чун ӑшшине пире парнеленӗшӗн. Яланах пулӑшса йӗркелесе пынӑшӑн тав тӑватпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, ҫӗр ҫинчи мӗн пур ырлӑха сунатпӑр.

**Саламлаканӗсем: ывӑлӗсемпе кинӗсем, хӗрӗ, мӑнукӗсем, хӑти-тӑхлачисем, мӗн пур тӑванӗ.**



Юратнӑ мӑшӑра, хисеплӗ те хаклӑ аннене – Ҫӗньял Апаш ялӗнче пурӑнакан **Галина Федоровна ФЕДОРОВӐНА** паян ҫуралнӑ кунӗ ячӗпе ӑшшӑн саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, ҫӑл куҫ пек тапакан вӑй-хал, вӑрӑм кун-ҫул, иксӗлми вӑй-хӑват, телей сунатпӑр. Эсӗ пур чухне эпир телейлӗ, эсӗ пирӗншӗн – ырӑ тӗслӗх, пурнӑҫ хӑвачӗ. Эпир сана пурте юрататпӑр, хисеплетпӗр! Юратнӑ амӑшӗпе пӗрле Юрий ывӑлӗ те хӑйӗн ҫуралнӑ кунне паллӑ тӑвать. Ӑна та ырлӑх-сывлӑх, телей, ӑнӑҫусем сунатпӑр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ тата ачисем.**



Юратнӑ аннене, хунямана, асаннене, кукамая, тӑхлачӑна – Йӳтӗркасси ялӗнче пурӑнакан **Галина Терентьевна КОЛЬЦОВӐНА** 65 ҫулхи юбилей ячӗпе пӗтӗм чун-чӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Чӑваш сурпанӗ пек вӑрӑм кун-ҫул, юман пек ҫирӗп сывлӑх, иксӗлми телей сунатпӑр. Кӗрекӳ ҫӑкӑр-тӑвартан нихҫан та ан татӑлтӑр, тӑванусенчен пуян пултӑр. Ачусемпе, мӑнукусемпе тата мӗн пур тӑванпа пӗрле савӑнмалла пултӑр.

**Саламлаканӗсем: хӗрӗпе кӗрӳшӗ, ывӑлӗсемпе кинӗсем, мӑнукӗсем, тӑхлачисем, ҫывӑх тӑванӗсем.**

**Ыйту–хурав**

## Ӗҫ стажне ҫирӗплетме май пур

**Эпӗ Чуманкасси ялӗнчен. Кӑҫал пенсие тухатӑп. Анчах та ун чухнехи Чапаев ячӗпе хисепленекен колхоз архивӗ ҫунса кайнӑ май ача чухне каникулта ӗҫленӗ ӗҫ кунӗсемшӗн хуҫалӑхран справка параймаҫҫӗ. Тархасшӑн, ӑнлантарса парӑр-ха: манӑн халӗ ӑҫтан пулӑшу ыйтмалла-ши?**

**Редакцие шӑнкӑравланинчен.**

***Ку ыйту ҫине хуравлама эпир РФ Пенси фончӗн районти управленийӗн пуҫлӑхне Елена Михайловна АЛЕКСАНДРОВӐНА ыйтрӑмӑр. Ҫапла каласа пачӗ вӑл:***

– Кун пирки ҫавна каламалла. 2001 ҫулхи декабрӗн 17-мӗшӗнче йышӑннӑ 173-ФЗ № "О трудовых пенсиях в Российской Федерации" Федераллӑ саккунӑн 9-мӗш пункчӗпе килӗшӳллӗн пенси прависене конвертацилес тӗллевпе ӗҫ стажне ҫирӗплетес тата шута илес тӗлӗшпе патшалӑх пенсийӗсене шутласа парассин тата ҫӗнӗрен шутласа парассин 2002 ҫулчченхи январӗн 1-мӗшӗнчен вӑйра пулнӑ йӗркипе усӑ курма мӗн пур.

Вӑйра пулнӑ асӑннӑ йӗркен право тытӑмӗ Раҫҫей Федерацийӗн 1990 ҫулхи ноябрӗн 20-мӗшӗнче йышӑннӑ 340-1 № "О государственных пенсиях в Российской Федерации" Саккунӗн тата РСФСР Социаллӑ пулӑшу министерствин 1991 ҫулхи октябрӗн 4-мӗшӗнче калӑрнӑ 190 № "О порядке подтверждения трудового стажа для назначения пенсий в РСФСР" хушӑвӗн положенийӗпе никӗсленет. Ку положение Раҫҫей Федерацийӗн Пенси Фончӗпе, РСФСР Ӗҫ министерствипе, РСФСР Юстици министерствипе килӗшсе йӗркеленӗ. Саккунӑн 89-мӗш статйин 1-мӗш пайӗпе килӗшӳллӗн рабочи, служащи, колхоз е ытти кооператив организацийӗн членӗ пулса ӗҫленӗ тапхӑр пӗтӗмпех пӗрлехи ӗҫ стажӗн шутне кӗрет.

(Вӗҫӗ 2-мӗш стр.)

# Раççей Пенси фончĕн районти управленийĕн ятарлă кăларăмĕ



### Декабрĕн 22-мĕшĕнче Пенси фончĕ 21 çул тултарать

## Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕ

***паян – çĕр-шывăн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ институчĕсенчен пĕри. Раççейре вăл социаллă пулăшу облаçĕнче патшалăх услугисем парассипе чи пысăк федераллă система пулса тăрать.***

Ăна 1990 çулхи декабрĕн 22-мĕшĕнче РСФСР Аслă Канашĕн Постановленийĕпе пенсисемпе тивĕçтермелли финанссемпе патшалăх ертсе пырассине йĕркелеме туса хунă. Вăл бюджетпа çыхăнман хăй тĕллĕнлĕх фончĕ пулса тăнă. РФ Пенси фондне туса хунăранпа пенсисемпе пособисене финанслас тата тӳлес енĕпе пачах çĕнĕ механизм çуралнă. Пенси тӳлесе тăма укçа-тенкĕ ĕç паракансемпе граждансен обязательнăй страховани взносĕсенчен пухăнма пуçăннă.

**Раççей Пенси фончĕн Муркаш районĕнчи управленийĕн аталану тапхăрĕсем**

* 1991 ç. – РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ шутĕнче Муркаш районĕнчи уполномоченнăйсен службине туса хунă.

* 1991–1996 ç.ç. – страховани взносĕ тӳлекенсене пурне те шута илсе пĕтернĕ, взноссене вхăтра тата тĕрĕс куçарнине тĕрĕслесе тăраççĕ, килекен тӳлевсене шута илессине йĕркеленĕ.

* 1997–1999 ç.ç. – "Об индивидуальном (персонифицированном) учете в системе государственного пенсионного страхования" Федераллă саккунпа (01.04.1996, 27-ФЗ №) çыхăннă функцисемпе задачăсене пурнăçлаççĕ.

* 2001 ç. – уполномоченнăйсен службин бази çинче РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи юридици вăйĕнчи управленийĕ йĕркеленет. Управление пенси шутласа парассин тата тӳлесе тăрассин функцийĕсене параççĕ. Ĕçлекен граждансен пенси прависен учетне туса пыраççĕ.

* 2002–2005 ç.ç. – пенси системине реформăланă май çĕнĕ пенси законодательствин нормисем пурнăçа кĕреççĕ.

* 2007 ç. – "О дополнительных мерах государственной поддержки семей, имеющих детей" Федераллă саккун (29.12.2006, 256-ФЗ №) пурнăçа кĕме тытăнать.

* 2008 ç. – "О дополнительных страховых взносах на накопительную часть трудовой пенсии и государственной поддержке формирования пенсионных накоплений" Федераллă саккун (30.04.2008, 56-ФЗ №) пурнăçа кĕме тытăнать.

* 2009 ç. – "О внесении изменений в Федеральный закон "О дополнительных мерах государственной поддержки семей, имеющих детей" Федераллă саккунпа (25.12.2008, 288-ФЗ №) килĕшӳллĕн ача амăшĕн (çемье) капиталĕпе пурăнмалли çурт-йĕр кредичĕсемпе займĕсене саплаштарма усă курассипе заявленисем йышăнас ĕç пуçăннă.

* 2010 ç. – "О страховых взносах в Пенсионный фонд Российской Федерации, Фонд социального страхования Российской Федерации, Федеральный фонд обязательного медицинского страхования и территориальные фонды обязательного медицинского страхования" Федераллă саккунпа (24.07.2009, 212-ФЗ №) килĕшӳллĕн страховани взносĕсене Пенси фондне, Социаллă страховани фондне, Обязательнăй медицина страхованийĕн федераллă тата территори фончĕсене администрациленĕ.

**Мĕнле ĕçсем пурнăçлатьха пирĕн управлени?**

**1. Пенсисем шутласа парасси тата тӳлесе тăрасси**

2011 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Управленире 9857 пенсионер учетра тăрать. Вĕсенчен ĕçлекеннисем – 2266 çын. Ĕç пенсине 9020 çын илет (ватлăха пула – 8129 çын, инвалида тухнипе – 565 çын, çемьере тăрантаракана çухатнипе – 326 çын).

Патшалăх пенсине илсе тăракансем 880 çын (социаллă пенси илекенсем – 840, Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсем – 16, "чернобылецсем" – 19, патшалăх служащийĕсем – 5).

3000 çын ытла (ветерансем, инвалидсем, Совет Союзĕн Геройĕсем, Раççей Геройĕсем т. ыт. те) уйăхсерен укçа тӳлевĕ (ЕДВ) тата уйăхсерен пурлăх тĕлĕшĕнчен хушма пулăшу (ДЕМО) илет.

Граждансен уйăхсерен укçа тӳлевĕ, социаллă услугăсем илмелли прависене учета илес тĕллевпе РФ Пенси фончĕ патшалăхăн социаллă пулăшăвне тивĕçлисен Федераллă регистрне туса пырать.

2011 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн вăтам виçи 7220 тенкĕпе, инвалида тухнипе паракан ĕç пенсийĕн вăтам виçи 4667 тенкĕпе, çемьере тăрантаракана çухатнипе паракан ĕç пенсийĕ 3856 тенкĕпе, патшалăх пенсийĕ 4794 тенкĕпе танлашать. Районĕпе уйăхсерен паракан пенсисен вăтам виçи – 6748 тенкĕ.

Уйăхсерен пенсисемпе пособисем тӳлеме районĕпе 75 миллион тенкĕ тăкакланать.

Патшалăх çуллен пенси виçисене индексацилет. 2011 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчен ĕç пенсийĕсене 8,8 процент, апрелĕн 1-мĕшĕнчен социаллă пенсисем – 10,27 процент, ЕДВ – 6,5 процент ӳстернĕ. 2012 çулта ĕç пенсийĕсене 2 тапхăрпа 9,4 процент индексацилеме пăхнă: февралĕн 1-мĕшĕнчен – 7 процент, ытти 2,4 процентне – апрелĕн 1-мĕшĕнчен. Социаллă пенсисем апрелĕн 1-мĕшĕнчен 14,1 процент ӳсеççĕ.

**2. Пенсионера пенси çумне регионти пурăнма кирлĕ минимум шайне çити федераллă социаллă хушма тӳлев (ФСД) шутласа парасси тата тӳлесе тăрасси**

Хальхи вăхăтра районта 903 пенсионер пенси çумне федераллă хушма тӳлев илсе тăрать. Социаллă хушма тӳлеве регионти пурăнма кирлĕ минимум шайне (пирĕн республикăпа 4259 тенкĕ, 2012 çултанпа 4818 тенкĕ пулать) пенси виçи çитеймен ниçта та ĕçлемен пенсионерсене параççĕ.

**3. Обязательнăй пенси страхованийĕн системин участникĕсен пенси прависен харпăр хăйĕн (персонифицированнăй) учечĕ**

Районта обязательнăй пенси страхованийĕн системинче 39035 çынна регистрациленĕ. РФ Пенси фончĕ вĕсенчен кашни валли харпăр хăйĕн лицевой счетне (СНИЛС) уçса парать. Унта пенси шутласа пама кирлĕ пур сведенисем те пур. Чи малтанах вара – гражданинăн пулас пенсийĕ валли фонда страховани взносĕсем мĕн чухлĕ куçнин информацийĕ.

СНИЛС пенси шутласа пама çеç кирлĕ мар. Вăл Раççей федераллă тата регион ведомствисен информаци шайлашăвĕнче гражданинăн персоналлă даннăйĕсен идентификаторĕ пулса тăрать.

2011 çулхи 3-мĕш кварталта харпăр хăйсен сведенийĕсене 277 страхователь-тен страхланă 8487 çыннăнне йышăннă.

**4. Пухăнакан пенсие йĕркелесси тата инвестицилесси**

1967 çулта çуралнă страхланă çынсен тата çамрăкраххисен ĕç пенсийĕн пухăнакан пайĕ йĕркеленет. Унăн виçи харпăр хăйĕн лицевой "пенси" счечĕн ятарлă пайĕнче палăрать. Саккунпа килĕшӳллĕн пухăнакан пенси виçине фонд рынокĕнче инвестицилеççĕ. Çавна май Пенси фончĕ ертсе пыракан 53 компанипе çыхăнса ĕçлесе пырать. Вăл шутра патшалăхăн ертсе пыракан Внешэкономбанк компанийĕпе тата патшалăхăн шутланман 117 пенси фончĕпе.

2003 çултан тытăнса РФ Пенси фончĕ страхланă çынсен пухăнакан пенсине инвестицилессипе ĕçлет. Реформа пуçăннăранпа Управлени специалисчĕсем страхланă çынсенчен 1870 заявлени йышăннă.

**5. Страховани взносĕсене обязательнăй пенси страхованийĕ тата обязательнăй медицина страхованийĕ çине администрацилесси**

2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса РФ Пенси фончĕ страховани взносĕсене Пенси фончĕ, социаллă страховани фончĕ тата обязательнăй медицина страхованийĕн Федераллă тата территори фончĕсем çине администрацилессипе ĕçлет. Администрациленĕ май взноссене тĕрĕс шутласа панипе куçарнине тĕрĕслесе тăма, вăл шутра тӳленĕ страховани взносĕсене зачета илнине тата ытлашши тӳленине каялла куçарса панине тĕрĕслеме, тӳлевсем енĕпе парăма шыраса илме май пур.

2011 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Муркаш районĕнче РФ Пенси фондĕнче пĕтĕмпе 1456 страхователь учетра тăрать. Вăл шутра 914 предприниматель, хресчен (фермер) хуçалăх ертӳçисем 112, 6 адвокат, ĕç паракан страхователсем 424. Кашни кварталтах вĕсем Пенси фондне Интернет урлă электронлă формăпа электронлă цифра мелĕпе алă пусса хӳтĕленĕ электронлă çыхăну каналĕсемпе отчетсем тăратаççĕ.

2011 çулта, малтан шутласа пăхнă тăрăх, РФ Пенси фончĕн тупăш пайĕ 148,8 миллион тенкĕпе танлашмалла.

**6. Ача амăшĕн (çемье) капиталĕн сертификачĕсене парасси тата асăннă укçа-тенкĕне тӳлесси**

2007 çулхи январь уйăхĕнчен тытăнса çак вăхăтчен ача амăшĕн (çемье) капиталне илесси пирки 1033 заявлени йышăннă. 2008 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче йышăннă 288-ФЗ № "О внесении изменений в Федеральный закон "О дополнительных мерах государственной поддержки семей, имеющих детей" Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн асăннă 108825,5 пин тенкĕ капиталпа усă курас пирки 361 заявлени çырса панă. Вĕсем çурт-йĕр туянма е юсама. реконструкцилеме илнĕ кредитсемпе займсене саплаштарма, ачисене вĕрентме пултараççĕ.

**7. Пенсисене патшалăх хушса финанслассин программине пурнăçласси**

2008 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕнче йышăннă 56 № "О дополнительных страховых взносах на накопительную часть трудовой пенсии и государственной поддержке формирования пенсионных накоплений" Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн 2008 çулхи октябрь уйăхĕнчен тытăнса Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕн районти управленийĕ пенсисене патшалăх хушса финанслассин программине хутшăнма ыйтса граждансенчен 669 заявлени йышăннă. Асăннă программа Раççей обязательнăй пенси страхованийĕн системинче страхланă кашни çынна хăйсен пенсин пухăнакан пайĕ çине хушма взноссем хывнипе, кунсăр пуçне патшалăх софинансировани шучĕпе çав суммăлăх укçа куçарса панипе тата ĕç паракан хушма взноссем куçарнипе пенсие тухма хатĕрленекен кашни çынна хăйĕн пулас пенси виçине самай ӳстерме май парать.

**8. Ведомствăсен электронлă хутшăнăвĕсен системипе (СМЭВ) усă курса патшалăх услугисем парасси**

2010 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче йышăннă 210-ФЗ № "Об организации предоставления государственных и муниципальных усуг" Федераллă саккуна пурнăçа кĕртсе пынă май Раççей Пенси фончĕ СМЭВ усă курса патшалăх услугисемпе тивĕçтерме пуçăнчĕ.

Акă 2011 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса Раççей Пенси фончĕ çак патшалăх услугисем валли кирлĕ документсене хăех ыйтса илет:

– ача амăшĕн (çемье) капиталĕн укçи-тенкипе мĕнле тĕллевпе усă курасси;

– ĕç паракан страхователсене Раççей Пенси фондĕнче регистрацилесси.

Çавна та каласа хăвармалла. Ку вăл патшалăх услугисем парассин малтанхи тапхăрĕ кăна. Вăл самай анлăрах та туллирех пулмалла. Ку система 2012 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пĕтĕмĕшле ĕçлеме пуçăнмалла. Çакна пĕтĕмпех çынсем валли тăваççĕ. Çынсем кирлĕ документсем илес тесе тĕрлĕ учрежденисенче черет тăрса вăхăт ан çухатчăр.

# Ĕç стажне çирĕплетме май пур

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Положенин 1.1 пункчĕпе килĕшӳллĕн ĕç стажне çирĕплетекенни чи малтанах ĕç кĕнеки пулса тăрать. Ĕç кĕнеки çук чухне, ĕç кĕнекинче çырса пынисем тĕрĕс мар е пачах та çук пулсан, ĕç стажне çирĕплетме çав тапхăрта ĕçленине ĕнентерекен справкăсемпе ытти документсем илсе пырас пулать.

Ĕç стажне документсемпе çирĕплетме май пулмасан вара свидетельсен кăтартăвĕсем кирлĕ пулаççĕ. Ун пирки Положенире ăнлантарса пани пур.

Акă ĕçленĕ тапхăра çирĕплетекен документсем çар çапăçăвĕсене пула, çĕр чĕтреннипе, шыв илнипе, вăйлă çил-тăвăла пула, пушарпа е ытти сăлтавпа çĕтнĕ пулсан, рабочи, служащи, колхоз членĕ пулса ĕçленине (патшалăх социаллă страхованийĕнче пулнă пулсан) çав тапхăрта ĕçленине икĕ е ытларах свидетель (пĕрлехи ĕçре е пĕр ĕç паракан патĕнчех ĕçленисем) çирĕплетсе пани кирлĕ.

1965 çулччен ĕçленине çирĕплетекен архив документсем мĕнле сăлтава пула çуккине пăхмасăрах свидетельсен кăтартăвĕсем кирлĕ пулаççĕ. Свидетельсем вара хăйсем çав тапхăрта çак ĕçре ĕçленине çирĕплетекен документсем тăратма тивĕç. Çавна та каласа хăвармалла: кун пек чухне свидетельсен кăтартăвĕсемпе палăртакан ĕç стажĕ пенсие тухма кирлĕ стаж виçин çурринчен ытла пулма пултараймасть.

Ĕçленĕ тапхăра свидетель кăтартăвĕсемпе палăртнă чухне законодательствăпа килĕшӳллĕн çын унпа ĕç килĕшĕвĕ тумалли ӳсĕм шайне çитнипе çитменнине шута илеççĕ. Ял хуçалăх артелĕсен Примерлă Уставĕпе килĕшӳллĕн артель членне (тепĕр майлă каласан яланлăх ĕçе) 16 çул тултарнисене кăна илме пултарнă. Апла пулсан свидетель кăтартăвĕсемпе ĕç стажне çын 16 çул тултарнăран тытăнса кăна шутласа параççĕ.

Правилăпа килĕшӳллĕн ĕç пенсине палăртма ĕçленĕ тапхăра свидетель кăтартăвĕсемпе çирĕплетнĕ чухне гражданинăн заявленипе пĕрле çак документсене тăратмалла:

– документ çĕтнипе çыхăннă инкек хăш çулта, хăш уйăхра, хăш числара пулнине çирĕплетекен çав территорири патшалăх (муниципаллă ) органĕ панă документ;

– ĕç паракан е патшалăх (муниципаллă) органĕн асăннă инкеке пула ĕç пирки калакан документсем пĕтнине тата вĕсене çĕнĕрен тума май çуккине ĕнентерекен докуменчĕ;

– свидетель кăтартăвĕсемпе палăртакан ĕç тапхăрĕ пирки документсем пулманни çинчен архив учрежденийĕ е патшалăх (муниципаллă) органĕ панă справка.

Свидетель кăтартăвĕсемпе ĕç тапхăрне палăртасси пирки пенсипе тивĕçтерекен орган йышăну тăвать. Гражданин заявленийĕпе вăл ĕçленин тапхăрне ĕç пенсийĕ илсе тăма тытăнмалли вăхăт çитиччченех палăртма пултараççĕ.

Енчен те свидетельсенчен пĕри гражданин ĕçленине теприпнчен ытларах тапхăршăн та çирĕплетсе парайрать пулсан, икĕ свидетелĕ те çирĕплетекен тапхăра шута илеççĕ.

Çапла вара çӳлте каланине çирĕплетсе çавна палăртмалла. Шкулта вĕреннĕ чухне каникул кунĕсенче колхозра ĕçленине свидетель кăтартăвĕсемпе çирĕплетнĕ чухне 16 çул тултарнă хыççăн ĕçлени кăна шута кĕрет.

# Вăхăт нумаях юлмасть

Пирĕн районта предпринимательсемпе хресчен (фермер) хуçалăх ертӳçисем, харпăр хăй тĕллĕн ĕçлекен адвокатсемпе нотариуссем 1032 çын. 2011 çулшăн вĕсенчен 72,5 процентĕ кăна взноссене тӳленĕ.

Страховани взносĕ тӳлеме кирлĕ чи пĕчĕк ĕç укçи шайĕ 4330 тенкĕпе танлашать. Пенси фондне тӳлемелли страховани взносĕсен тарифĕ 26 процент (20 процент пенсин страхланă пайĕ валли тата 6 процент пенсин пухăнакан пайĕ валли), обязательнăй медицина страхованийĕн федераллă фондне – 3,1 процент тата обязательнăй медицина страхованийĕн территори фондне – 2 процент.

Çапла вара 2011 çулта предпринимательсемпе хăйсен ĕçĕпе çыхăннă уйрăм çынсен çакăн чухлĕ тӳлемелле пулать:

– Пенси фондне – **13509 тенкĕ те 60 пус** (4330 тенкĕ х 26% х 12 уйăх). 1966 çулта çуралнисен тата аслăраххисен пĕтĕм сумма пенсин страхланă пайĕ çине каять, ыттисен çак суммăран **10392 тенкĕ** (20%) ĕç пенсийĕн страхланă пайĕ çине тата **3117 тенкĕ те 60 пус** (6%) пенсин пухăнакан пайĕ çине;

– обязательнăй медицина страхованийĕн федераллă фондне – **1610 тенкĕ те 76 пус** (4330 тенкĕ х 3,1% х 12 уйăх);

– обязательнăй медицина страхованийĕн территори фондне – **1039 тенкĕ те 20 пус** (4330 тенкĕ х 2% х 12 уйăх).

Взноссене декабрĕн 31-мĕшĕнчен кая юлмасăр бюджетлă мар кашни фонда уйрăмшар тӳлемелле. Унсăрăн пенисем тӳлемелле пулать.

Бланк формисемпе тӳлев документсене мĕнле çырса тултармалли пирки кирлĕ информацие Раççей Пенси фончĕн сайчĕ çинче "Самозанятому населению" пайра вырнаçтарнă (http:www.pfrf.ru/samozaniatoe poryadoc/. Интереслентерекен ыйтупа пирĕн пата та пыма пултаратăр.

**О. АЛЕКСЕЕВА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пай пуçлăхĕ.**

**Кăларăма В. Шапошников хатĕрленĕ.**

Пуçаруллисене – патшалăх гранчĕ

# Харпăр хăй ĕçне пуçарма тĕллев лартман-и?

*Чăваш Ен экономикишĕн никĕсри тĕп тытăм – пĕчĕк тата вăтам бизнес. Юлашки икĕ çулта мĕн пур бюджетăн укçи-тенки шучĕпе паракан патшалăх пулăшăвĕ икĕ хут ӳсрĕ е çакă 300,3 миллион тенкĕпе танлашрĕ. Çавăн пекех тĕрлĕ калăпăшлă (50 пинрен пуçласа 250 тенкĕ таран, 300 пинрен пуçласа 1 миллион тенкĕ таран грант) пулăшу памалли программа ĕçлет. Малашлăха пăхса çĕннине вăя кĕртес, çапла майпа харпăр хăй ĕçне аталантарса хушма тупăш илес тĕллевлисене валли патшалăх питĕ вырăнлă пулăшу уйăрать. Çавна май Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн постановленийĕпе килĕшӳллĕн хăйсен ĕçне пуçарма хатĕрленекен пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсен патшалăх пулăшăвне тивĕçме ятарлă бизнес-план хатĕрлемелле. Çак йĕркепе тĕплĕнрех паллаштарма эпĕ район администрацийĕн экономика пайĕн ертӳçинчен Э.И. СИМАКОВĂРАН ыйтрăм.*

**– Эльвира Иосифовна, патшалăх пулăшăвне кăмăл тăвакан кашни çын тивĕçме пултарать-и?**

– Патшалăх пулăшăвне хăйсен ĕçне пуçарас тĕллев лартнă пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсем тивĕçме пултараççĕ. Çакăн пек пуçаруллă çынсем валли патшалăх ятарлă грант уйăрать. Патшалăх кун йышши грант парассине 2006 çултанпа йĕркеленĕ. Пулăшу тивĕçлисем патне çиттĕр тесе çулсеренех конкурс йĕркелетпĕр.

**– Çапах та паян тĕллев лартнă, ыран вара сирĕн пата килнĕ, ун йышшисем пулăшăва тивĕçме пултарĕç-и?**

– Паллах, çук. Раççей Федерацийĕн саккунĕпе килĕшӳллĕн гранта тивĕçес тесен чи малтан налук органне кайса регистрациленмелле. Анчах та регистрациленнĕ тапхăр пулăшăва тивĕçес вăхăт тĕлне пĕр çулталăкран ытла пулмалла мар.

**– Конкурса хутшăнас текен çыннăн мĕнле документсем пулмалла-ха?**

– Чи малтанах харпăр хăй ĕçне пуçăнас шухăшлă çыннăн вăл е ку енĕпе тупăш илме пултармалли пĕр-пĕр çĕнĕлĕх тупмалла. Эсир вăя кĕртес ĕç район тата хăвăр экономикăшăн пĕлтерĕшлĕ те тупăшлă пулмалла. Çитес вăхăтра пурнăçлас çĕнĕлĕх валли мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ кайма пултарнине шутламалла, çавна май çакна тĕпе хурса бизнес-план хатĕрлемелле.

**– Тĕрĕс йĕркеленĕ бизнес-плана хăш шайра тишкереççĕ?**

– Тĕрĕс те тулли хатĕрленĕ бизнес-плана Чăваш Республикин Экономикăпа суту-илӳ министерствинчи конкурс комиссийĕ пăхса тухать. Хăш чухне вара ку ĕçе районти ĕçлĕ комиссие те шанаççĕ. Комисси пĕр пуçаруçăран пĕр бизнес-план кăна йышăнать. Енчен те комиссие тăратнă документсем çителĕксĕр пулсан сирĕн ĕçе пăхса тухмаççĕ. Çакăн пирки ку енĕпе ответлă ĕçченсем çичĕ кун хушшинче çырса пĕлтереççĕ. Тĕрĕс хатĕрленĕ документсен пуххине вун пилĕк кун хушшинче пăхса тухаççĕ. Бизнес-плана балсемпе хакласçĕ, 4 – 5 балл пухнисем патшалăх пулăшăвне тивĕçеççĕ.

**– Çапах та пуçаруçăсене патшалăх мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ парса пулăшма шантарать-ха?**

– Ку тĕлĕшпе уйăракан пулăшу калăпăшĕ 300 пин тенкĕрен пысăк пулмасть. Ĕç пуçаруçи бизнес-планра пăхса хунин вунă процент чухлĕ ĕç пурнăçланине (мĕн чухлĕ тăкакланине) çирĕплетекен документ кирлĕ.

**– Патшалăх пулăшăвĕ хăш шайри бюджетсенчен саплашăнать?**

– Бизнес-плана ăнăçлă хӳтĕленĕ пуçаруçăсен ĕç-хĕлне федераллă тата республика шайĕнчен саплаштараççĕ.

**– Çапах та пурнăç пур чухне те пĕр тикĕссĕн шумасть. Пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕн налук парăмĕ е панкрута тухас тапхăр, ытти кăлтăк пулма пултарать. Çакăн пек чухне патшалăх пулăшăвĕ пирки ĕмĕтленме май пур-и?**

– Шел пулин те, çакăн пек чухне ун йышшисене конкурса хутшăнтармаççĕ.

**– Тен гранта тивĕçнĕ пуçаруçăсене ятран асăнса хăваратăр?**

– Кăçал 300 пин тенкĕллĕ гранта Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчен пĕр çын тивĕçрĕ. Бизнес-плана ăнăçлă хӳтĕленисен грант шайĕ тĕрлĕрен пулма пултарать. Ĕç калăпăшне тата пĕлтерĕшне кура 50 пинрен пуçласа 300 пин тенкĕ таран параççĕ. Пĕчĕкрех калăпăшлине тивĕçнисем ытларах.

**– Пĕр миллион тенкĕллĕ гранта камсем тивĕçме пултараççĕ-ха?**

– Кун йышши гранта хресчен (фермер) хуçалăхĕсем тивĕçеççĕ. Вĕсемпе малашне тачăрах ĕçлеме палăртатпăр.

Эпĕ вара пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсемпе тӳрреммĕнех ĕçленĕрен çынсене пуçаруллăрах пулма сĕнесшĕн, уйрăмах çамрăксене. Патшалăх пулăшăвĕпе тĕрĕс те вырăнлă усă курма, харпăр хăй ĕçне анлăлатма тăрăшмалла.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

# Çын пурнăçне татнă

Прокуратурăра

Çынна ырă туни ырăпа таврăнать, теççĕ халăхра. Усал туни вара мĕнле майпа çаврăнса çитет-ши?

Август уйăхĕ. Лăпкă та тӳлек кун, лайăххи пирки ытларах ĕмĕтленес килет. Вăхăт тăхăр сехет тĕлĕнче кăнаха. Çак вăхăтра хуçалăхра, кил-çуртра аппаланакан çын валли ĕç тулли ех. «Симĕс çĕлен» ăçта «чашкăрнине» сыхлакан çыннăн вара пуçĕнче пĕр шухăш çеç пулĕ.

Çирĕм пилĕк çула çывхаракан Дима каçхине тăван килĕнче çĕр каçман пулас-ха. Вăл Мари Эл Республикинчен хамăр районти тăван ялне çитет. Автомашина çинчен аннăскер ерипен хăйĕн кил-çурчĕ еннелле утать. Кĕсьери «Славянская» шурă эрех савăчĕ вара утнăçемĕн шăмпăлт-шăмпăлт тутарса хăй пирки аса илтерсе пырать. Çакна пушатма пĕр тус тĕл пулинччĕ текен шухăш Димăн пуçĕнче хĕмленсе пырать. Ара хăшĕ-пĕришĕн «симĕс çĕлен» – пурнăç тыткăчи вĕт, чи çывăх тус евĕр ялан пĕрле. Тĕрĕссипе вара çак савăтра ача-пăчан телейсĕр шăпи, хĕрарăм куççулĕ, арканнă çемье, таптаннă юрату...

Çапла вара Дима çĕкленӳллĕ кăмăлпа çул тăрăх утать, çамрăк çыннăн пуçĕнче тĕрлĕ шухăш явăнать. Пулăç пулăçа аякранах туять тенĕ евĕр, çул çинче вăл хăй пĕлĕшне тĕл пулать. Икĕ арçын шурă эрехе пушатма кавар тăвать. Каланă – тунă, вĕсем юлташ килĕнчи апатлану пӳлĕмне кĕрсе сĕтел хушшине вырнаçаççĕ. Хаяр шĕвек чĕлхене те çемçетет, пуçа та минретет мар-и? Черкке хыççăн черкке пушанать, сăмах çăмхи тĕрлĕ енлĕ сӳтĕлет, аса илмелли вара самай.

Калаçса ларнă хушăрах икĕ çын хушшинче хура кушак чупса иртет, пӳртри шăплăха вăл кăшт кăна хӳрипе тивертсе хăварать. Çулăм çине краççын сапнă евĕр урлă сăмах хирĕçĕве куçать. Ăнсăртран «сенкер экрана» чун кĕрет, кĕмсĕрт туса çĕрелле тӳплеттерт. Анчах та вĕсем çакна асăрхамаççĕ те. Харкашу çĕçĕ тытасси патне илсе çитерет. Хăшĕ аялта, хăшĕ çӳлте пулнине вара тавçăрса илме те йывăр. Çын картĕнчен тухнă Дима çĕçĕпе пĕлĕшне икĕ-виçĕ хутчен кăкăрĕнчен чикет. Кая юлчĕ пулин те, лару-тăру ăнсăртран çаплалла çаврăнса тухни Димăна шартах сиктерет, кăра çилле маларах лăплантарнă пулсанччĕ те...

Алли те, ури те Димăн тăр-тăр чĕтрет. Ара вăл çак самантра кăна хăй аллипе тепĕр çын пурнăçне татрĕ вĕт. Хăранипе, çухалса кайнипе вăл каялла пăхмасăр пӳлĕмрен ыткăнчĕ, кайран урамалла чупса мар, вĕçсе тухрĕ тейĕн. Юнпа пĕвĕннĕ çĕçĕ вара вырăн çинче выртса юлчĕ, юнпа варалаңнă çи-пуç – Дима çумĕнче. Тăван урам ăна ытла та хăрушшăн курăнчĕ, кашни чӳречерен çын пӳрнепе тĕлленĕ пек туйăнчĕ. Тен куç хупса аяккалла тармалла? Чим-ха, тен каярах пулсан та пулăшу чĕнмелле? Çакăн пек шухăш çаврăнчĕ Димăн пуçĕнче. Унăн хăлхинче пĕлĕшĕн пулăшу ыйтса хăйăлтатнă сасси янăрарĕ. Самантлăха çухалса кайнă арçын тăртăр чĕтрекен аллипе телефон хыпашласа тупрĕ, «112» номерпе шăнкăравларĕ. Хăранипе татăклăн-татăклăн калаçакан Дима хăй çынна çĕçĕпе чикни пирки, полици тата васкавлă пулăшу кирли çинчен пĕлтерет.

Пӳртре калама çук пысăк инкек, хăрушла ӳкерчĕк куç умне тухать: юнпа пĕвеннĕ çын кĕлетки, арăшпирĕш выртакан япала, çурт ăш-чикне пайламалла шари! çухăракан сас. Анчах та çакăн пек синкер сăлтавĕ мĕнре пулчĕ-ха: эрех, ăнсăртран тухнă хирĕçӳ е тата тахçан пĕрле вĕреннĕ хĕр-тантăш пирки аса илни – çакна, паллах, халь тин тĕрĕссине никам та калаймĕ – пĕри йĕплĕ пралук леш енче ытла та аякра, тепри вара (каçарччăр та пире)...

Сурана вăхăт сиплет теççĕ те, пур хуйхăна сиплеме пултарĕ-ши вăл? Уйрăмах çакăн пек самант çывăх çынсемшĕн çав тери йывăр-çке: хирĕç пулакан çын куçран пăхни те, сăмах хушни те йăлтах иртнине аса илтерет.

Çапла вара суд Дима Раççей Федерацийĕн Уголовлă Кодексĕн 105 статйин 1 пайĕнче пăхнă йĕркене пăснине çирĕплетрĕ. Преступник çитес вăхăта çирĕп режимлă колонире ирттерессине палăртрĕ. Патшалăх айăплавçи район прокурорĕ С.А. Фирсов пулчĕ.

**Р. АЛЕКСАНДРОВА.**

# Муркашсен маттур ывăлĕ С.М. Михайлов (Янтуш) 190 çул тултарчĕ

*Муркаш районĕнче сахал мар маттур ывăл-хĕр çитĕннĕ, çав шутра – чăваш халăх историйĕпе культуринче тарăн йĕр хăварнисем те. Шăпах вĕсенчен пĕри – Вăтам Атăл çи тăрăхĕн пĕрремĕш тавра пĕлӳçи, этнограф-çыравçи, историкĕ, Раççей географĕсен пĕрлĕхĕн членĕ С.М. Михайлов (Янтуш) çуралнăранпа 190 çул çитнине паллă турĕç те ĕнтĕ Муркашсем. Уяв паллă ентеш çуралнă тăрăхра – Юнкăри С.М. Михайлов (Янтуш) ячĕпе хисепленекен шкулта иртрĕ. Унта И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ тата Чăваш патшалăх гуманитари наукисен институчĕн преподавателĕсем, тавра пĕлӳçĕсем, районти чăваш чĕлхипе литература учителĕсемпе культура ĕçченĕсем, Юнкă шкулĕнче вĕренекенсемпе ку тăрăхра пурăнакансем хутшăнчĕç.*

**ЮНКĂРАН МУСКАВ ТАРАН**

Чи малтанах пуçтарăннисем Спиридон Михайловичăн стелли умĕнче митинг ирттерчĕç. Асăну митингне уçнă май Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.В. Фомин ку тăрăхри çынсем хăйсем Янтуш тăрăхĕнче пурăннипе мăнаçланнине палăртрĕ. Мăнаçланнипе пĕрлех Спиридон Михайловичăн ятнесумне çӳлте тытас, унăн ятне упрас, унăн ĕçне малалла тăсас тесе районта сахал мар ĕç туса ирттернĕ. Ку тĕлĕшпе район администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан В.А. Калинин çакна палăртрĕ. 1966 çулта Янтуш çуралса ӳснĕ ялти шкула унăн ятне панă. Спиридон Михайлов çуралнăранпа 175 çул çитнине уявланă вăхăтра Юнкăра çĕнĕ шкул тума палăртса хăварнă. Тепĕр пилĕк çултан палăртни пурнăçланчĕ: Юнкăри С.М. Михайлов ячĕллĕ шкул капмар çурта куçрĕ. Ăна эпир ентешĕмĕрĕн 180 çулхи юбилейĕ умĕн 2001 çулхи ноябрĕн 24-мĕшĕнче хаваслă лару-тăрура уçрăмăр.

Ентешĕмĕрĕн 185 çулхи юбилейĕ тĕлне ăна асăнса музей уçма шутларăмăр. Хаваслă лару-тăрура вăл хăйĕн алăкĕсене ентешĕмĕрĕн юбилейĕнче декабрь уйăхĕнче яриех уçрĕ. Янтуша асăнса лартнă стеллăна та çав кунах уçнă.

– Пирĕн Спиридон Михайловичăн ĕçне малалла тăсассипе ĕçлемелле, – терĕ Владимир Аркадьевич.

Ку енĕпе вара районта кăна мар, республикăра та палăртса хунă ĕçсем пур иккен. Чăваш патшалăх гуманитари наукисен институчĕн этнологипе антропологи пайĕн ертӳçи, истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ Г.Б. Матвеев Спиридон Михайловичăн пурнăçĕпе ĕçĕхĕлĕ çинчен кĕнеке пуçтарса хатĕрлемеллине палăртрĕ. Институт ирттерме хатĕрлекен комплекслă экспедицинче Янтушăн ентешĕсем – Муркашсем активлă хутшăнасса та шанаççĕ. И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультечĕн доценчĕ О.В. Студенцев палăртнă тарăх Янтушăн ниçта пичетленмен ал çырăвĕсем те 20 иккен. Чăваш ачи «Казанские губернские новости» тата Мускавра тухса тăракан ытти изданисенче пичетленнине чăн-чăн пысăк ăнăçу тесе хакларĕ.

Митингра Янтушсен йăхĕ ячĕпе А.М. Яндушкин район администрацине, килнĕ хăнасене хăйсен тăванне манманшăн, унăн чыснесумне çĕкленĕшĕн тав турĕ. Сăмах май каласан С.М. Михайлов (Янтушăн) стелли шăпах унăн çурчĕпе юнашар вырнаçнă. Чĕрĕ чечексем хучĕç митинга пуçтарăннисем стелла умне.

**РАЙОНШĂН ÇЕÇ МАР, РЕСПУБЛИКĂШĂН ТА ПĔЛТЕРĔШЛĔ КУ ÇУРТ**

Ун хыççăн хăнасем С.М. Михайлов (Янтуш) музейĕнче пулса курчĕç. «Куç умне шăп та лăп Çпиркка тухса тăчĕ», – терĕç хăнасем музейра сĕтел хушшинче вĕренсе ларакан 3-мĕш класс ачине курсан. Шăпах çак ӳсĕмре 8 çулта Спиркка Чикме хулине Т.Ф. Михеев купца патне вĕреннĕ çын пулма тухса каять. Музейри япаласене пăхсан юнкăсем хăйсен ентешĕн кун-çулне паян кун та тĕпчени куç умĕнчех. Спиридон Михайловичăн тăванĕ, Юнкă шкулĕнче пуçламăш классене вĕрентекен Е.Г. Яндушкина, Янтуш раттин «пурнăç йывăçĕпе» паллаштарчĕ. Хăйĕн ывăлĕпе Чăваш патшалăх университетĕнче 3-мĕш курсра вĕренекен ывăлĕпе Мишăпа вĕсем ял тăрăх ватă çынсенчен сахал мар ыйтса пĕлнĕ. Çапла майпа Янтушсен тепĕр икĕ сыпăкне тупса палăртнă. Елена Григорьевна Спиридон Михайлович хăй килĕнче шкулта (çавăнтанпа ку историе Юнкăра пуçламăш шкул уçăлнипе кĕрсе юлать) хăй хатĕрленĕ букварьпе вĕрентнине асăнчĕ. Шел, Спиридон Михайлович хатĕрленĕ букварь сыхланса юлайман. Анчах та паллă ентешĕмĕрпе çыхăннă тепĕр япалана вара сыхласа хăварма паян май та пур, çапла тума кая та мар. «Спиридон Михайлович çуралса ӳснĕ кил паян та пур. Вăл районти чи кивĕ çурт шутланать. Çавна упраса хăварасчĕ»,– тет Е.Г. Яндушкина.

Чăннипех те ку Муркаш районĕшĕн çеç мар, республикăшăн та истори палăкĕ вырăннех пулма кирлĕ.

**ЯНТУШ ЯТНЕ СӲНТЕРМĔÇ МУРКАШСЕМ**

Янтуш 190 çул тултарнине халалланă наукăпа практика конференцийĕ Юнкă шкулĕнче иртрĕ. Тухса калаçакансем хамăр ентешĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинче чарăнса тăчĕç. Паллă ентешĕмĕр Мускаври, Хусанти, Петербургри журналсенче 30 ытла материал пичетленине палăртрĕç. Вĕсем пурте чăваш, вырăс, çармăс халăхĕсен этнографийĕпе, историйĕпе, географийĕпе, статистикипе çыхăннăскерсем пулнă. Çавăн пекех вăл калавсемпе инсценировкăсем, сăвăсем те çырнă. Тĕпрен илсен, ăсчахсем палăртнă тăрăх, Спиридон Михайлович вырăсла çырнă. Унăн 6 ĕçĕ çеç чăвашла. 1852–1860 çулсенче Спиридон Михайлович 50 ĕç çырать. Вĕсенчен 33-шĕ пичетре кун çути курнă.

Янтушăн пурнăçĕн, ĕçĕхĕлĕн тата ытти саманчĕсем çинче чарăнчĕç конференцире. Унсăр пуçне Янтушăн чысне çӳлте тытас, унăн ĕçне малалла тăсас тесе мĕн тумалли енĕпе сĕнӳсем пачĕç. Чăваш халăх ăсхакăлĕпе ӳнер академийĕн президенчĕ Е.Е. Ерагин шучĕпе Юнкăри Янтуш стелли патне лайăх çул тумалла, кунта асăну комплексне уçмалла. Çавăн пекех Янтуш пулнă, çӳренĕ вырăнсене тухса çӳрени те вырăнлă пулмалла.

Истори ăслăлăхĕсен докторĕ В.П. Иванов калашле, С.М. Михайлова (Янтуша) асăнса пысăк палăк лартма та вăхăт çитнĕ республикăра. Ентешĕмĕр 195 çул тултарнă тĕле ку ĕçе тума ĕлкĕрсен аван пулмалла. Çавăн пекех Янтуш ячĕллĕ фонд туса хурсан та вырăнлă пулмалла. Ку вăл унпа çыхăннă ĕçсене чылай хăвăртрах пурнăçлама май парĕччĕ.

Спиридон Михайлович хăйĕн пурнăçне историпе этнографие тепчес ĕçе халаллани хăех пире унăн ĕçне малалла тăсмаллине пĕлтерет. Çавна тĕпе хурса ĕнтĕ эпир республикăра чи малтан хамăр районăн энциклопедине кăлартăмăр. Ытти нумай-нумай маттур ентешсемпе пĕрле С.М. Михайлов кун-çулĕ те унта курăмлă вырăн йышăнчĕ. Ун хыççăн хамăр халăхăн ырă йăлийĕркисене тепĕр çĕнĕ кĕнекере çырса хăвартăмăр. «Муркаш районĕ: уявсем, йăла-йĕркесем» ятлă пулчĕ вăл. Çакăн çинчен асăнчĕ депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн çумĕ, Чăваш халăх ăс-хакăлĕпе ӳнер академийĕн членĕ В.И. Вязов. Валерий Иванович район энциклопедийĕн 2-мĕш томне кăларма вăхăт çитнине палăртрĕ.

Наукăпа практика конференцине вĕрентекенсемпе вĕренекенсем те хутшăнчĕç. Ку шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Н.В. Шандимирова Юнкăра çуралса ӳснĕ тепĕр çыравçă пулнине палăртрĕ. Вăл Н.Я. Яковлевăн ăс-хакăла вĕрентекен произведенийĕсем çинче чарăнса тăчĕ. Тата çак шухăша палăртрĕ: Николай Яковлевичăн хĕрĕсем ашшĕне республикăри çыравçăсен йышне кĕртессе шанаççĕ, кĕтеççĕ.

Çакна та палăртма кăмăллă. Пирĕн ентеше – С.М. Михайлова (Янтуша) асăнса кăçалхи мартăн 19-мĕшĕнче Чăваш Енри тавра пĕлӳçĕсен канашĕн Чăваш халăх ăс-хакăлĕпе ӳнер академийĕн Пухăвĕ «Тăван Ене тĕпчессинчи çитĕнӳсемшĕн» («За успехи в изучении родного края») медале çирĕплетнĕ. Наукăпа практика конференцийĕнче ентеше асăнса хатĕрленĕ медале А.М. Яндушкина, В.М. Илугина, Юнкă шкул директорне В.Г. Федорова тата çак ял тăрăхĕн пуçлăхне В.В. Фомина пачĕç.

Ентеше халалланă мероприятире Спиридон Михайловича асăнса ирттернĕ мульти меди презентацин, ӳкерчĕксен конкурсĕсене тата Интернет-олимпиадăна пĕтĕмлетрĕç, çĕнтерӳçĕсене дипломсемпе парнесем пачĕç. Уяв вара Юнкă шкул ачисен концерчĕпе вĕçленчĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

